К 63.3(-5Кра)
А 94
Ч-49257

О.В.Афанасьева
В.М.Данилов



# Мăнаçланатпăр санпа, Кĕçĕн Чуллă!

(Историлле очерк)

Красноармейски ялĕ - 2014

Национальная библиотека ЧР
4-049257

экз.
К63,3(-5Кра)
А94

**О. В. АФАНАСЬЕВА**
**В. М. ДАНИЛОВ**

# Мӑнаҫланатпӑр санпа, Кӗҫӗн Чуллӑ!

**(Историлле очерк)**

Красноармейски ялӗ – 2014

63.3(2Рос.Чув-5Кра-2Малые_Челлы)
+К63.3(-5Кра-2Малые-Челлы)

Ку кĕнеке Еншик Чуллă ял тăрăхне кĕрекен Кĕçĕн Чуллă ял аваллăхĕпе хальхи пурнăçне сăнлать, унăн маттур çыннисем çинчен каласа парать. Тăван тăрăх историне тĕпчекенсемшĕн усăллă вăл.

И-49257

Национальная библиотека
Чувашской Республики

## Умĕн калани

# Мăнаçланатпăр санпа, Кĕçĕн Чуллă!

Тăван ял. Унран хаклăраххи çĕр çинче çук та пуль. Кирек ăçта пулсан та, ачалăхпа çамрăклăха аса илтерекен симĕс курăклă урамсем пуçа килеççĕ. Шухăшпа вара унта васкатпăр. Кунта асатте-асаннесем ака-суха тунă, атте-анне, тăвансемпе çывăх çынсем кĕтеççĕ, пĕрле ӳснĕ тус-юлташсем тĕл пулăва йыхравлаççĕ.

Çавăнпах пушă вăхăт тупăнсанах мăнаçлă чăваш йăмрисемлĕ яла çитме çине тăратпăр. Вăл пире хаваспах хăй ытамне йышăнать. Вăйă пухăннă вырăна çитсе килетпĕр. Тус-юлташсем те кунтах. Анчах çӳçĕсем кăштах кĕмĕлленнĕ ĕнтĕ вĕсен. Çапах чунĕсем çамрăк чухнехи евĕрех юлнă. Тăван ял урамĕнче каçăхса кайсах калаçатпăр-сăмахлатпăр, пĕр-пĕрин çинчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлес тетпĕр, ырă хыпарсемпе ылмашăнатпăр, çитес тĕл пулу кунне палăртатпăр.

Пурне те тăван ял, унăн илемĕ, пĕви-кӳлли, çывăхри ката-вăрманĕ, тарăн çырми-çатрипе куçпа виçейми уй-çаранĕсем пĕрлештереççĕ. Çавăнпах кунта татах та татах пухăнатпăр.

Çулсем иртнĕçемĕн тăван ял та улшăнать. Унта халĕ асфальт сарнă çул çитерет. Пӳрт -çурта çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтаççĕ. Çыннисем те улшăнаççĕ. Анчах тăван ял пирки вĕсен шухăшлавĕ малтанхиех юлать. Мăнаçланатпăр эпир санпа, тăван ялăм – Кĕçĕн Чуллă!

# I. Аваллăхран тытăнса

Ку кĕнекене Тăван çĕр-шывăн 1941 – 1945 çулсенчи вăрçинче Аслă Çĕнтерÿ тунăранпа 70 çул çитнине тата çапăçусенче пиçĕхнĕ ентеш-салтаксене, Кĕçĕн Чуллă ялĕн мĕн пур çыннисене халаллатпăр.

Авторсем.

В. З. Константинов тавра пĕлÿçĕ хăйĕн «Трак тăрăхĕнчи ялсем» (Красноармейски, кăрлач, 1995) кĕнекинче Кĕçĕн Чуллă 18-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче пулса кайнă тесе шутлама юранине çырать.

«1859 çулхи переписçре ку ялта 13 кил пулнине, 68 çын пурăннине пĕлетпĕр. Арçынсем хĕрарăмсенчен тăватă çын сахалтарах шутланнă. 1989 çулта – 13 арçын, 26 хĕрарăм учетра тăнă. Хальхи вăхăтра 25 хуçалăхлă ялта 51 çын кун-çулне ирттерет», - тет Владимир Захарович, Э. Ф. Филиппов ăслăлăх кандидачĕн ятне илнине, И. М. Григорьев полковнике çитнине пĕлтерет.

Иккĕмĕш Микулай патша вăхăтĕнче, 1861 çулччен, Кĕçĕн Чуллăсен çурчĕсем Чумаш ялĕн кăнтăр енчи çырмин хĕррипе ларса тухнă пулнă. Анчах ку вырăнта шыв çитменрен пурăнма кансĕртерех тивнĕ. Çакна шута илсе, Кĕçĕн Чуллăсен виçĕ ăрăвĕн çыннисем пурăнма урăх вырăн шырама тухса каяççĕ. Хура çăла çитсе, Крентейкасси ялĕ тĕлĕнче пĕр каç выртма шутлаççĕ. Вĕсен пĕрле ула кĕсре пулнă. Ирхине тăрсан, кĕсре хĕвел тухăçнелле пăхнине кураççĕ.

Çынсем «çак вырăнта тĕпленме телейлĕ» тесе шутлаççĕ, хальхи Кĕçĕн Чуллă ялĕ ларакан çĕре çул тытаççĕ. Иккĕмĕш каç кунти çырмара çĕр выртма пулаççĕ. Ула кĕсрине тăлласа çырмана курăк çиме яраççĕ, хăйсем çывăрма выртаççĕ. Тутлă ыйхăран вăрансан, çынсем лаши канма выртнине асăрхаççĕ. Хуçисене курса кĕсре те тăрать, çиййĕнчех хĕвел тухăçнелле пăхса чĕтренсе силленет, каяшне те унтах хăварать. Кĕçĕн Чуллăсем «çакăнтан телейлĕ вырăн урăх пулас çук», теççĕ, кунта юлаççĕ.

Чумаш енчен вăл вăхăтра Кĕçĕн Чуллăна Паварнăй (Никитин, Филипп Ефимов, Михаил Ефимов, Федор Прокопьев, Е. П. Павлов, Мефодий Иванов), Зверь (Çевĕр) хуçа (Григорий Захаров, Иван Зверьев, Ефим Зверьев, Иван Матвеев, Илья, Мефодий) тата Сахрун (ачисем – Василий, Филипп, Федор, Кондратий, Алексей, Никифор тата Александр) йăхĕсем куçса килнĕ. Малтанхи вырăнта шывран консĕртерех пулнине ватăрах çынсем лайăх астăваççĕ.

Чумаш çырмине тухнă çĕре «кив ял вырăнĕ» тенĕ. Çырмана шыв ăсма кайнă, анчах ăна тумламăн-тумламăн пуçтармалла пулнă. Чумаш уйĕсенчи анасенчен Сĕвек ту кĕперĕ урлă лашасемпе кĕлтесем турттарнă. Вăл вырăнтан халĕ çуран çеç каçма пулать.

1917 çулччен Кĕçĕн Чуллăра 42 хуçалăх шутланнă, çав шутра Чумашран куçса килнисем - 8, Пысăк Чуллăран килсе тĕпленнисем - 8.

1917 çулхи Октябрьти революциччен уессемпе вулăссем пулнă. Кĕçĕн Чуллă Етĕрне уесĕн Упи

вулăсне кĕнĕ. Унăн чиккисем Пĕчĕк Супарăн хăмла пахчи тĕлĕнчен тытăнса чукун çулпа Вăрманкас ялĕнчи Анфиса Павлован анкарти çумĕпе халĕ Чумаш ялне çитерекен çулпа кунти çырмана тухнă, унтан улăхалла анса Мăн Çавал юхан шывĕн хĕррине пынă. Питĕ пысăк канав чавса, мишавай юпи те лартнă пулнă. Кĕçĕн Чуллă, Еншик Чуллă, Мăн Супар Етĕрне уесĕнче, Пĕчĕк Супар, Вăрманкас, Чумаш, Именкасси ялĕсем Çĕрпӳ уесĕн Чурачăк вулăсĕнче шутланнă. Ялсен чиккисене те палăртнă. Вăл тапхăрта çĕре арçынсене ятсем тăрăх пайласа панă, хĕрарăмсене тивмен вăл. Лаптăксем, çитменнине, ялсем çывăхĕнче пулман. Кĕçĕн Чуллăсен çĕрĕсем Сĕвек ту çырми леш енчи Чумаш уйĕнче вырнаçнă. Хальхи Мăн Супар уйĕнчи Чашлама çырмин икĕ енчи тыр - пула та алăпа вырса 3 – 4 çухрăмран Супар улăхĕпе киле турттарнă. Мăн Супарти хресченсен анисем вара Кĕçĕн Чуллă çырмин леш енне тухнă. Кĕтӳ вĕсен çĕрĕсем çине кĕни те час-часах пулнă. Çавăншăн выльăхсене те пĕр хут çеç мар тытса кайнă вĕсем. Хăшĕ-пĕри пăрçа та акнă, ачасем ют анасенчи пăрçана вăрлама та çӳренĕ.

Халăх тĕттĕмлĕхре пулнă ун чухне, вĕренме май килмен. Пĕрремĕш учительсем Мефодий Сильвестров (Вăрманкасран), Лука Абрамов (Пысăк Чуллăран), Яков Васильев (Еншикрен), Карп Денисов (Кĕçĕн Чуллăран) пулса тăнă. Малтанласа çывăхри ялсенчи тĕне ĕненекенсем Именкассинчи чиркĕве çӳренĕ. Вăл пысăк прихут шутланнă. Çакна шута илсе, Пысăк Чуллă, Еншик, Мăн Супар ялĕсен çыннисем хăйсен вăйĕпе Еншик Чуллă территорийĕнче 1903 çулта йывăçран çĕнĕ чиркӳ лартма шутланă. 1906 çулта вара светить туса унта

кĕнĕ. Кĕçĕн Чуллăсем çак ĕçе хутшăнман, Именкасси прихутĕнчех юлнă. Чиркӳпе пĕрлех унта пыракансене кĕрсе тухма хурал пӳрчĕ тунă. Хальхи шкул территорийĕнче пупсемпе тиечуксен çурчĕсем, сачĕсем, пахча çимĕç туса илмелли лаптăкĕсем вăрман хĕррине çитичченех сарăлса выртнă. Пĕрремĕш пачăшкă Бекренев, тиечукĕ Павел Мефодьев пулнă. Пачăшкă 1910-1916 çулсенче ачасене шыва кĕртни çинчен çырнисем те упранса юлнă.

Халĕ Тăван çĕр-шывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçинче вилнисене асăнса лартнă палăк вырăнĕнче пĕр класс вырнаçмалăх шкул тата учитель валли пӳлĕм лартса панă. Пĕрремĕш учительте Мефодий Сильвестров, ун хыççăн 1923 çулта Лука Абрамов ĕçленĕ. Яков Васильев учитель пурăнмалли вырăнта вĕрентнĕ.

1917 – 1925 çулсенче

Çӳлерех асăннă шкула 1907 çулта лартнă. Халăх сывлăхне сыхлассипе ĕçлекенсем пулман ялсенче. Чирлисене Çĕрпӳ хулинчи больницăна е Упири фельдшер пунктне илсе кайнă. Тавар туянма та çынсем Çĕрпӳри пасара çӳренĕ.

1923 – 1924 çулсенче 5 – 6 ялпа ялпосем йĕркеленĕ. Еншик Чуллăра малтанхи лавкка Василий Петров умĕнче пулнă (халĕ унта пĕве). Ялпо председателĕ - Никифор Антонов, лавкка хуçи – Егор Матвеев.

Вулăс центрĕнче çуралнă ача ятне çыртарнă, мăшăрланнине те, çын вилнине те унтах паллă тутарнă. Унта ĕçлекенсене ялсенчен уполномоченнăйсем суйласа ярса вĕсемшĕн алă тăратса суйланă. 1923 çулта вулăс ĕçтăвком председательне Еншикри Николай Петрович Сорцова шаннă. Тĕп йăхĕ халĕ çук. Çĕре арçынсемпе хĕрарăмсене пĕр пек валеçсе панă, анчах та вăл малтанхиллех унта-кунта вырнаçнă.

## 1926 – 1930 çулсенче

1926 çулта вара çĕре сортласа ялсем çывăхнех пайласа-уйăрса панă. Кĕçĕн Чуллăсене акма 204 тата выльăх çӳретмелли улăх 17, ытти 35 гектар çырмасемпе сухаламалла мар лаптăксем тивнĕ. Вĕсене мишавай I-IV сортсене уйăрса çав çулхи июньте килсем тăрăх валеçнĕ. Унпа 1931 çулччен йĕркеллĕ усă курнă.

Çак çулсенчех вулăссене пĕтерсе ял совечĕсем йĕркеленĕ. Кашни ялтах уполномоченнăйсемпе исполнительсем суйланă, вĕсем урлă ĕçленĕ. Еншик Чуллă ял советне Еншик, Пысăк Чуллă, Кĕçĕн Чуллă тата Вăрманкас кĕнĕ. Çĕрпӳ районĕнче шутланнă. Ял совет ĕçтăвкомĕн пĕрремĕш председателĕ Пысăк Чуллăри Василий Львович Львов пулнă, секретарĕ Еншикри Николай Герасимович Герасимов (вăл 1930-мĕш çулсенче Шупашкар хулине ĕçлеме куçса кайнă).

1930 çулта çĕр-шыв ертӳçисем 4-5 яла пĕрлештерсе ял хуçалăх артелĕсемпе коммунăсем туса хума шутланă. Еншик, Пысăк Чуллă, Кĕçĕн Чуллă, Мăн Супар тата Вăрманкас ялĕсенчи

хресченсем «Гигант» ял хуҫалӑх артелӗ йӗркеленӗ. Председателӗ - Лука Абрамов, секретарӗ - Яков Васильев. Анчах чылайӑшне ҫакӑ килӗшмен. Каярах вӗсен ыйтӑвне тивӗҫтернӗ, колхозсене ялсем тӑрӑх йӗркелеме пуҫӑннӑ.

1930 ҫултах Пысӑк Чуллӑри уйрӑм 11 хуҫалӑх «Прогресс» колхоз йӗркелеҫҫӗ. Председательне Лазарь Аверкиевич Аверкиева, секретарьне Лука Абрамович Абрамова шанаҫҫӗ. Колхоза Лазарь Аверкиев, Петр Моисеев, Митрофан Лукиянов, Илья Сергеев, Сергей Михайлов, Дмитрий Осипов, Лука Абрамов, Константин Емельянов тата ыттисем кӗреҫҫӗ. К. Емельянова 1931 ҫулта раскулачить туса ҫуртне туртса илеҫҫӗ.

1917 – 1930 ҫулсенче шыв тата ҫилпе авӑртакан кӗрпе арманӗсене пуян ҫынсем тытса тӑнӑ. Вӗсемех начартарах пурӑнакансен анисене те тара илсе пурӑннӑ. Ку евӗррисене кварталсем тӑрӑх пайласа ҫирӗп заданисем ҫитернӗ.

Пирӗн тӑрӑхри пӗр ҫемьене ӗмӗрлӗхех Ҫӗпӗре янӑ.

Вӑрӑсем те тупӑннӑ: Василий Минин (Шӑхаль), Тимофей Алексеев (Еншик) тата Фомин (Санькасси). Хӑйсем пирки сӑмах саракансене вӗсем персе те вӗлернӗ. В. Минин асли пулнӑ, Ҫӗрпӳ тӗрминче темиҫе хут та ларнӑ, унтан тухса тарса сӑтӑрла нумай ӗҫ туса ҫӳренӗ, халӑха ҫаратнӑ. Вӗсем 1926 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчи каҫхине 2 лавпа Кӗҫӗн Чуллӑри Николай Федоровӑн анкартинчи ампарӗнчен сӗлӗ вӑрласа каяҫҫӗ. Ял арҫыннисем йӗрпе кайса вӗсене тытаҫҫӗ. 2 лав сӗлӗне каялла илсе килеҫҫӗ. Т.

Алексеевпа Фомина тӗрмене хупаççӗ. В. Минина вара тытаймаççӗ, тарса çӳрет.

Çав çулхи июнӗн 9-мӗшӗнчи каçхине Кӗçӗн Чуллӑри 2 хуçалӑха – Семен Харитоновпа Александр Дмитриевӑнне – тивертсе яраççӗ, пушарта Григорий Яковлев, Семен Харитонов, Алексей Никитин, Павел Григорьев, Александр Дмитриев, Семен Ильин тата Семен Денисов хуçалӑхӗсем кӗлленеççӗ. Вут тивертекене никам та тытайман. Çав каçхине ялти хуралта Пелагея Алексеевапа Евдокия Дмитриева пулнӑ. Вӗсем çурçӗр иртни 1 сехетре яла В. Минин кӗнине те курнӑ. Каярахпа ӑна Санькассисемех вӗлерсе Шӑхаль уйне пырса пӑрахни пирки сас-хура тухнӑ.

1929 çулччен Çӗрпӳ хулине вак çулсем çеç çитернӗ. Çавалхӗрри Кӑнаш улӑхӗпе Рынкӑ салине çитнӗ, хӑшӗ-пӗрисем тӳрӗрен çӳренӗ. Революциччен Михайловка ялӗ те пулман. 1929 çулта Красноармейскине Çӗрпӳпе çыхӑнтаракан шоссе тума тытӑннӑ. Ӑна часах хута ярайман. 1935 çулта Красноармейски районне туса хурсан, Мӑн Çавал юхан шывӗ урлӑ йывӑç кӗпер тунӑ. 1975 çулччен чӑтрӗ вӑл, унтан çӗрсе йӑтӑнса анчӗ. Улӑх варринче те йывӑç икӗ кӗпер пулнӑ, ейӳ тухса çулленех вӗсене çӗмӗрсе хӑварнӑ, юсама лекнӗ.

## 1931 – 1940 çулсенче

Кӗçӗн Чуллӑра 1931 çулхи январь – февраль уйӑхӗсенче уйрӑм 9 хуçалӑхран колхоз тӑваççӗ, унта Николай Федоров, Макар Федоров, Иван Никитин, П. Никифоров, Александр Дмитриев, Семен Ильин,

Афанасий Герасимов, Федор Кондратьев тата Карп Денисов кĕреççĕ. «Победа» ят хураççĕ, председателе Афанасий Герасимова, секретаре Карп Денисова суйлаççĕ.

Ятаксем тăрăх çур акинче акмалли вăрлăха, ĕç лашисемпе ут хатĕрĕсене пĕрлештереççĕ. Ака умĕн лайăх çĕрсене касса илеççĕ.

Уйри тыр - пула пухса кĕртнĕ хыççăн вăрлăх тата куçман фондсене, пулăшу кассине хăвараççĕ. Юлашкине ĕç кунĕпе пайпа валеçсе параççĕ. Çăва тухсан, лашасене хупма витесем, тырă хума ампарсем кирлĕ пулаççĕ. Пуянраххисенчен илме тивет. Хăш-пĕр чухне çапăçма та лекнĕ. Ялти комсомолецсем – Петр Никифоров (вăлах секретарь те), Александр Дмитриев, Семен Игнатьев, Никифор Герасимов, Ульяна Семенова, Иван Федоров, парти членĕ Афанасий Герасимов ку тĕлĕшпе активлăх кăтартнă.

1931 çултах Еншикре «Новая Сила», Вăрманкасра «Венера» колхозсем йĕркеленеççĕ. «Новая Силăна» малтан Николай Абрамов, Яков Васильев, Матвей Дмитриев, Егор Смехов, Ефим Андреев, Захар Семенов, Лаврентий Захаров, Петр Иванов (вăл ун чухне Канашри педтехникумра вĕреннĕ, килтен хăй пĕччен пĕрлешӳллĕ хуçалăх членĕ пулса тăнă) кĕнĕ. «Венерăн» пĕрремĕш председателĕ - Яков Львов, секретарĕ - М. Кузьмин. Унта Яков Львов, Мефодий Сильвестров, Антон Антонов, Елена Львова, Родион Мефодьев, Михаил Кузьмин, Кузьма Степанов хуçалăхĕсем пĕрлешнĕ.

1934 çулта ял совечĕ çумĕнче фельдшер пункчĕ уçаççĕ. Çурчĕ пулманран Пысăк Чуллăри пĕр килте ĕçлеççĕ Надежда Гурьевапа трахсестрасем. Кĕçех Надежда Гурьева Илья Сергеева качча тухать. Çав çулсенчех ветеринари пункчĕ те уçăлать Данил Федоров патĕнче. Пункт заведующийĕнче Яковлев, санитарта Данил Федоров вăй хураççĕ.

1935 çулта Красноармейски районне туса хураççĕ. Унта Еншик Чуллă, Тĕрер, Метикасси, Мăн Супар, Алманч тата Чуракасси ял совечĕсем те кĕреççĕ. Çав çулах коллективизаци вĕçленет. Партин Трак райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче Е. Майрин, райĕçтăвком председателĕнче Липатов, секретарĕнче Иван Егоров ĕçленĕ. Пайсенче тимлекенсен хваттерсенче те тăрăшма тивнĕ малтанах.

1931 çулта Еншик Чуллă ял советне кĕрекен 4 ялта – Пысăк Чуллăра, Еншикре, Кĕçĕн Чуллăра тата Вăрманкасра – уполномоченнăйсем тата исполнительсем пулнă. Еншик ялĕн уполномоченнăйĕнче Михаил Федоров тимленĕ, каярахпа вăл районти уполминзаг агентĕнче ĕçленĕ, халăхран тир тата çăм пухнă. Пысăк Чуллă уполномоченнăйĕнче Аркадий Мефодьевич Мефодьев вăрçă тухиччėнех вăй хунă. Вăрманкасра вара ку тивĕçе 1935 çулччĕнех Николай Иванович Иванов, Кĕçĕн Чуллăра Николай Федоровпа Александр Иванов туса пынă. Районтан хушнă ĕçсене те тунă вĕсем.

Çак тапхăрта колхозсем пысăкланнă май, «Прогреспа» «Новая Силăра» 4-шар бригада туса

хунӑ. Вӑрҫӑ тухас умӗн пӗчӗкрех ялсенче те 2-шер бригада йӗркеленнӗ.

1931 ҫулта ял совет ӗҫтӑвком председательне Илья Яковлевич Яковлева (Пысӑк Чуллӑран), секретарьне Александр Михайлович Михайлова сессири депутатсем алӑ тӑратса суйлаҫҫӗ. Счетовод-кассира Йӳҫкассинчи Роман Иванова шанаҫҫӗ.

1932 ҫулхи июньтен ӗҫтӑвком председательне Пысӑк Чуллӑри Митрофан Лукиянова, секретарьне Еншикри Василий Григорьевич Григорьева ҫирӗплетеҫҫӗ. Январӗн 12-мӗшӗнче секретаре ҫултаӑклӑх курсра вӗреннӗ Александр Дмитриевич Дмитриева илеҫҫӗ. Вӑл 1934 ҫулччен ӗҫлет.

1934 ҫулта ӗҫтӑвком председателӗ пулма Митрофан Лукияновах шанаҫҫӗ, секретарӗ - Александр Дмитриев (Кӗҫӗн Чуллӑран), счетовод-кассирӗ - Митрофан Гаврилович Ершов (Еншикрен).

Ку ҫулсенче «Прогресс» колхоз председателӗ Илья Сергеевич Сергеев, счетовод-секретарӗ Лаврентий Степанович Степанов, «Новая Сила» ертӳҫи Михаил Афанасьевич Афанасьев, счетовод-кассирӗ Гурий Николаевич Николаев, бригадирӗсем Петр Иванов (1), Николай Иванов, Семен Павлов, Дмитрий Гаврилов, «Победа» председателӗ Афанасий Герасимович Герасимов, секретарь-счетовочӗ Федор Кондратьевич Кондратьев, бригадирӗ Николай Федорович Федоров, «Венерӑн» ертӳҫи Яков Львович Львов, секретарь-счетовочӗ Арсений Павлович Павлов, бригадирӗ Михаил Кузьмич Кузьмин пулаҫҫӗ.

Ĕçсене алă вăйĕпе тунă, акнă, çурлапа вырнă, лашасемпе çĕмелсем турттарнă, тăпачăпа çапнă – нимĕнле механизаци те пулман. Пысăкрах ялсенче ĕç лашисем 70-80, пĕчĕкреххисенче 20-30 пуç шутланнă.

Çĕр-шыв ертӳçисем çавăнпах ял хуçалăхĕнчи йывăр ĕçсене механизацилеме тĕллев лартнă. 1935 çулта пирĕн районта та МТС йĕркеленнĕ, март уйăхĕнче унта ХТЗ, СТЗ маркăллă тракторсем, «Коммунар» молотилка килнĕ.

1935-1936 çулсенче трактористсен пĕрремĕш курсне Именкасси ялĕнче те уçнă, унта Мăн Супарти Варвара Ивановна Иванова, Пĕчĕк Супарти Екатерина Ивановна Ивановапа Екатерина Павлова тата ыттисем вĕреннĕ. 1936-1937 çулсенче ку евĕр курс Янкас ялĕнче те ĕçленĕ, унта Яков Васильев, Пĕчĕк Супарти Кронид Лаврентьев, Мăн Супарти Антонина Егорова, Кĕçĕн Чуллăри Арсений Семенов, Макар Федоров, Афанасий Герасимов пĕлӳ илнĕ.

1938 çулта Еншик Чуллăра та МТСри хĕрарăмсен бригади ĕçленĕ (бригадирĕ - Афанасий Мефодьев, ăна пулăшаканĕ - Симьянов), унта Антонина Егорова, Елена Георгиева (Шуркаран), Екатерина Иванова тимленĕ. МТС çур акиччен колхозсемпе килĕшӳсем çирĕплетнĕ, кĕркунне ĕçшĕн тырăпа шутласа илнĕ. Трактористсене хăш хуçалăхра тата мĕн чухлĕ ĕçленĕшĕн ĕç кунĕ пуçне 3 килограмран кая мар тырăпа тӳленĕ.

Каярахпа колхозсене çĕрпе ĕмĕрлĕхех усă курма актпа çирĕплетсе панă. «Победа» колхоз канцелярийĕнче çав акта районтан Еремеев килсе

панӑ. Председательте Кирилл Федорович Федоров ӗҫленӗ ун чухне. «Новая Сила» ертӳҫи ку ҫулсенче Михаил Афанасьевич Афанасьев, «Венерӑн» Кузьма Степанович Степанов пулнӑ.

1936-1940 ҫулсенче - ӗҫтӑвком председателӗ Яков Львов, секретарӗ Александр Дмитриев, налук агенчӗ Герман Тихонович Тихонов.

1936 ҫулта Канаш-Шупашкар чукун ҫул тума пуҫланӑ. Ял совечӗн унта ӗҫлеме куллен ҫынсем яма тивнӗ. Техника тавраш пулманран ку чукун ҫула 1940-мӗш ҫул тӗлнелле кӑна ӗҫе кӗртнӗ.

**1941 – 1945 ҫулсенче**

1941 ҫулхи июнӗн 22-мӗшӗнче Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫи тухать. Ҫар службинче запасра тӑракансене, мобилизационнӑй предписани малтанах панисене, 1-3-7 кунран тухса каймаллисене, ял советне чӗнтерсе повесткӑсем панӑ. Ку йышра Еншикри Алексей Филимонович Смирнов, Кӗҫӗн Чуллӑри Ксенофонт Иванович Иванов тата Пӗчӗк Супарти Иван Семенович Семенов пулнӑ. Иккӗмӗш йыша Кӗҫӗн Чуллӑри Арсений Семенович Семенов, Макар Федорович Федоров та лекнӗ. Ял советӗнче ӗҫлекенсен повесткӑсемпе ҫынсене ӑсатнисӗр пуҫне лашасене те яма тивнӗ.

1942 ҫулхи январӗн 28-мӗшӗнче ял советӗнчи 11 ҫынна вӑрҫа каймаллине телефонпа пӗлтернӗ: Николай Краснова, Иван Федорова (Пысӑк Чуллӑран), Александр Григорьева, Михаил Афанасьева, Яков Гурьева (Еншикрен), Александр Дмитриева, Карп

Денисова (Кĕçĕн Чуллăран). Красноармейскинчи çар комиссарне А. К. Кондратьева та, кунта ĕçлекен Кротова та ят тухнă. А. Г. Кондратьев фронтран каялла таврăнайман.

1944 çулта Чурачăк районĕ туса хунă, Еншик Чуллă ял советне унта кĕртнĕ, Чумаш, Шурка, Çурткасси ялĕсем ку ял совечĕн йышне кĕнĕ.

1942 çулта «Прогресс» колхоз председателĕнче Петр Яковлевич Яковлев, счетовочĕсенче Р. Григорьевпа Д. Андреева, «Новая Сила» ертÿçинче Михаил Афанасьев, счетовочĕсенче Гурий Николаевпа Митрофан Гаврилов, «Победа» председателĕнче Афанасий Герасимов, счетоводĕнче Анастасия Савельевна Иванова, «Венера» колхоз председателĕнче Кузьма Степанович Степанов, счетоводĕнче Михаил Кузьмин вăй хунă.

1945 çулта вара «Прогресра» (председателĕ Гурий Ефремович Ефремов, счетовочĕ Д. Андреева), «Новая Силăра» (Федор Семенов), «Победăра» (Иван Федоров, Василий Николаев, каярахпа Карп Денисов, вăрçăран килсен, Александр Дмитриев) «Венерăра» (Николай Лукич Лукин – Еншиксем, Евлампия Даниловна Данилова) хастарсем ĕçленĕ.

Вăрçă хыççăн ял совет ĕçтăвкомĕн председателĕ Вăрманкасри Яков Львович Львов, секретарĕ Пысăк Чуллăри Наталия Гервасьевна Гервасьева, налук агенчĕ Пысăк Чуллăри Варфоломей Константинов пулнă.

Кӗҫӗн Чуллӑри А. Дмитриев аса илнӗ тӑрӑх, вӑл 3-мӗш Котельниковски гварди танк корпусӗн 18-мӗш бригадин батарейинче нимӗҫсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. 1943 ҫулхи июлӗн 9-мӗшӗнче Курск пӗкки патӗнче тытӑҫӑва кӗрсе тӑшмана Киев еннелле хӑваланӑ. Октябрӗн 23-мӗшӗнче Днепр юхан шывӗ урлӑ каҫнӑ. Унӑн юлташне Ф. Н. Кудрявцева пӗр ҫапӑҫура 5 ҫӗртен йывӑр амантнӑ, ӑна госпитале ӑсатнӑ. Урӑх тӗл пулман вӑл тусне. Ун вырӑнне оруди командирне Чул хула облаҫӗнчи Сергач районӗнче 1914 ҫулта ҫуралнӑ Виктор Титова лартнӑ. Вӑрҫӑран та вӗсем пӗрлех таврӑннӑ, анчах ентеш унӑн тулли адресне манӑҫа кӑларнӑ. Федор Николаевич Кудрявцев вара 1909 ҫулта Вӑрнар районӗнчи Кӑкшӑмра ҫуралнӑ, каярахпа Пинер Айкӑша куҫнӑ, авланнӑ, 2 ывӑлпа 1 хӗр ӳстернӗ. Волонтер ял совет ӗҫтӑвкомӗнче налук агентӗнче ӗҫленӗ. Ӑна 1942 ҫулхи май уйӑхӗнче батарейӑри 76 миллиметрлӑ тупӑ командирне, А. Дмитриева наводчике лартнӑ. Вӗсем ҫав ҫулхи июльте Брянск фронтӗнче 32 кун хушши ҫапӑҫнӑ, иккӗшӗ ҫеҫ ыр-сыввӑн тӑрса юлнӑ. Сентябрӗн 1-мӗшӗнче вӗсене Сталинград фронтне куҫарнӑ. Белгород ҫывӑхӗнче 1943 ҫулхи мартӑн 16-19-мӗшӗсенче пулнӑ тытӑҫура нимӗҫсен вӑтам 2 танкӗпе пӗр автомашинине персе аркатнӑшӑн иккӗшне те Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе наградӑланӑ, 1000-шер тенкӗ укҫа панӑ.

1944 ҫулхи февральте А. Дмитриевпа юлташӗсем Ленинград ҫывӑхӗнчи ялсене ирӗке кӑларма хутшӑннӑ. Апрельте ӑна I Украина фронтне куҫарнӑ. Май уйхӑнче Румыни ҫӗрне ирӗке кӑларнӑ вӗсем. Июльте Белоруссин халӑхне чуралӑхран хӑтарнӑ. Ҫавӑншӑн Александр Дмитриевича та И. Сталин Тав

тунă. Çулла Борисов, Минск, Вильнюс хулисем ирĕке тухнă. 1945 çулхи январь-февраль уйăхĕсенче нимĕç фашисчĕсемпе Балтика тинĕсĕ хĕрринче çапăçнă. Каярахпа А. Дмитриев Аслă Главнокомандующин И. В. Сталинăн Тав хучĕсене пĕр хут кăна мар тивĕçнĕ.

## 1946 – 1950 çулсенче

Еншик Чуллă ял совет территорийĕнче 7 ялпа 7 колхоз шутланнă. Яков Львович Львов çĕре кĕрсен, председательте Андрей Емельянович Емельянов, секретарьте Наталия Гервасьевна Гервасьева ĕçленĕ.

Вăрçă хыççăн халăха çав тери йывăр тивнĕ. Лашасем, техника пулман. Районти МТС та техника тивĕçменнипе колхозсене пысăк пулăшăвах кӳреймен. Апла пулин те, çынсем вăрçă суранĕсене сиплес тĕллевпе ĕçе кар тăрса кӳлĕннĕ, промышленноçра, строительствăра, культурăра, ял хуçалăхĕнче, ытти отрасльсенче кăтартусем ӳссе пысăклансах пынă. Ялсене тракторсемпе комбайнсем, ытти машинăсем ытларах килме тытăннă. Çĕр-шыв ертӳçисем ку тапхăрта колхозсене пысăклатас çул çине тăнă. Ял совет территорийĕнче 7 хуçалăхран пĕр колхоз тума йышăннă. 1950 çулхи январьте çак тĕллевпе партин Чурачăк райкомĕн представителĕ Сидор Кузьмин килнĕ, пĕчĕк колхозсенче пухусем ирттерсе вĕсенчен пĕр хуçалăх йĕркелеме йышăну тунă, «Прогресс» ятах хăварнă. Председателе Лаврентий Степанович Степанова, унăн çумне Семен Игнатьевич Игнатьева, бухгалтерне Александр Дмитриевич Дмитриева суйланă. Çав çулхи апрельте Еншикри «Новая Сила»

колхоз та «Прогресс» çумне пĕрлешнĕ, ку çулах Пĕчĕк Супарсене те вĕсем хăйсен йышне илнĕ.



ял пĕвине тăвакансем (1950 - мĕш çулсем)

1949 çулхи тыр - пула пухса кĕртнĕ чухне çанталăк йĕпе-сапаллă килнĕ. Вăрлăх йĕркеллĕ хывса хăварайман. «Победăсăр» пуçне пăрça вăрлăхне никам та хатĕрлеймен. С. И. Игнатьев председателе Шупашкара 6 уйăхлăха вĕренме ярсан, ун вырăнне А. Д. Дмитриев юлнă. Александр Дмитриевич аса илнĕ тăрăх, пăрça вăрлăхне канцеляри çурчĕн урайне сарса тата тимĕр кăмакапа (ăна Мария Григорьева хутса тăнă) типĕтнĕ. Унăн шăтаслăхĕ те лайăх пулнă. Тырăна килĕрен типĕтсе патшалăха леçнĕ. Вăрçăран таврăнсан, Кĕçĕн Чуллăра 6 çул хушши бригадирта Семен Андреевич Андреев вăй хунă. Уй-хирти пĕтĕм



Ч-49257
Национальная библиотека
Чувашской Республики

ĕçе алă вăйĕпе тунă. Ĕçлекенсене анасем (кашни культурăнне) çирĕплетсе панă. Бригадир ĕç кĕнекинче паллă туса пынă. Нумай выракансене «боевой листоксем» урлă хавхалантарнă. 1948 çулта тыр - пул пухса кĕртнĕ вăхăтра вăйлă çил-тăвăл килсе çапнă. Вăл Кĕçĕн Чуллăри И. Григорьев, С. Денисов, А. Никандров пӳрчĕсен тăррисене тĕппипех илсе ывăтнă, А. Дмитриевăн алăк тăррине çĕклесе çуртсем урлă пахчана пăрахнă. Еншикри пĕр хĕрарăм, лаша пăхнă çĕрте ĕçлекенскер, уйран тарса килсе вите патне тăнă. Çил-тăвăл пĕрене ӳкернипе вилн вăл.



Александра Михайловапа (сулахайри) Ульяна Николаева ĕç хыççăн (1967ç.)

## Кĕçĕн Чуллă ялĕн çыннисем çинчен

Паварнăйсен йăхне çаксем кĕнĕ: Егор Павлович Павлов (1836 – 1921 çулсенче пурăннă). Унăн виçĕ ача – Тимофей, Екатерина тата Дмитрий. Тимофей Егоровичăн 7 ача çуралать: Вера, Сергей, Петр, Михаил, Анна, Мария, Раиса. Мария Именкасси ялне качча тухнă. Лена Пĕчĕк Супарти Венедикт Семеновпа çемье çавăрать. Екатерина Еншикри Григорий Павловпа пĕрлешнĕ, 4 ача ӳстернĕ - Ефим, Федора, Ираида тата Мария. Юлашки иккĕшĕ Шупашкарта тĕпленнĕ. Дмитрин мăшăрĕ - Мăн Супар ялĕнчи Александра Михайлова, вĕсен 5 ача: Евдокия (1909 ç. ç.), Александр, Анисия, Алексей тата Анна. Евдокия Мăн Супарти Тимофей Тимофеева качча тухнă, 2 ывăлпа 4 хĕр пăхса ӳстернĕ. Аслă хĕрĕ - Нина – ялах качча кайнă, нумай ачаллă пулса тăнă. Анатолий - Шупашкарта, унăн – 3 ача.

Александр Дмитриевич Дмитриев 1911 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче çуралнă. 1938 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мăн Супарти Егор Максимов хĕрĕпе – 1918 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче çуралнă Антонина Егоровна Егоровапа пĕрлешнĕ. Вĕсен – 8 ача. Асли – Лев (1940 ç.ç.) – Красноармейскинчи вăтам шкул хыççăн çарта пулать. Каярахпа Хусанти медицина институтĕнче, унтан Чул хулари çар академийĕнче вĕренет. Любовь (1942 ç.ç.) Именкассинчи вăтам шкул пĕтерсен, Витебскри çыхăну техникумĕнче вĕренет. Çĕрпӳ хулинчи çыхăну уйрăмĕнче 2 çул ĕçленĕ хыççăн ăна министерствăна илеççĕ, куçăмсăр майпа аслă пĕлӳллĕ пулса тăрать. Николай (1946 ç.ç.) вăтам шкул хыççăн Одесса хулинчи авиачаçре хĕсметре тăрать. Куйбышеври профтехучилищĕре

пĕлӳ илет, Чурачăкра çулталăк ĕçлет, унтан Шупашкара куçать. Унăн – 2 ывăл. Валентина (1948 ç.ç.) Шупашкарти промышленноç тракторĕсен заводĕнче вăй хунă. Галина (1953 ç.ç.) Шупашкарти педагогика институчĕн ют чĕлхесен факультетĕнче вĕреннĕ, Вăрнар районĕнчи Вăрман Кипек ялĕнчи вăтам шкулта тимленĕ. Унăн – 2 хĕр. Анатолий (1955 ç.ç.) Хусанта аслă пĕлӳ илнĕ. Смоленск облаçĕнче, Херсон облаçĕнчи Цурюпинск хулинче вăй хунă. Людмила (1960 ç.ç.) Шупашкарта ĕçлесе пурăнать.

Хĕвел тухăçĕнчен ял пуçламăшĕнче Ильин пулнă, ачисем – Андрей, Егор тата Клавдия (вăл Пĕрремĕш Вăрманкас Чурачăка качча тухнă). Андрей ачисем – Семен, Матрена, Никон – ялта пурăнман. Егор Томск облаçне куçса кайнă, вĕсен çурчĕ вырăнĕнче –уй.

Паварнăйсен йăхĕнченех – Михаилпа Филипп Ефимовсем. Михаилăн ывăлĕ - Семен. Ку йăхран – Евдокия Семенова (1912 ç.ç.), унăн ачисем – Иван (Шупашкарта), Юрий (Çĕрпӳ районĕнчи Паваркассинче), Валентинăпа Нина - (Свердловск облаçĕнче). Семен ывăлĕ - Иван Ваньков (1915 ç.ç.) - вăрçăра вилнĕ, мăшăрĕ - Евдокия Егоровна – Шупашкарта. Икĕ ача – Александрпа Нинăна - ӳстернĕ.

Павел Михайлович Михайлов йăхĕнчисем – Е. Павлова - Мăн Супара, Ольга Пăрăнтăка качча тухнă (учительница).

Филипп Ефимович Ефимов Çĕпĕре куçса кайнă.

Паварнăйсен йăхĕнчи Федор Прокопьевич Прокопьевăн 2 ывăлпа 4 хĕр пулнă. Николайпа унăн ывăлĕ - Василий çĕре кĕнĕ. Василий мăшăрĕ – Ульяна – Мăн Супарсем. Вĕсен 7 ача – Алик – Шупашкарта, Роза, Валентина, Акулина - Çĕнĕ Шупашкарта, Светлана – Шупашкар районĕнче, Ольга – Красноармейскинче.

Никитинсен хуçалăхĕ: Семен, Иван, Алексей. Семен ачисем: Митрофан, Арсений, Марфа. Ку вырăнта каярахпа – Александра Иванова хуçалăхĕ.

Тимофей Егоров хуçалăхĕ вырăнĕнче – Михаил Тимофеевăн ывăлĕ - Константин Михайлов (Шупашкар).

Иван Трофимов Пысăк Чуллăран куçса килнĕ.

Павел Михайлов вырăнĕнче пурăнакан çук.

Ф. П. Прокопьев хуçалăхĕнче – кинĕ - Ульяна Николаева.

Карп Александров 1926 çулта Çĕпĕре куçса кайнă. Унăн вырăнĕнче – Евдокия Семенова.

Иван Никитин хуçалăхĕнче ывăлĕн – Ксенофонт Ивановăн мăшăрĕ - Анастасия Савельевна Иванова. 5 ача: Людмила, Ронид, Роза, Анатолий, Алина (пĕри те ялта пурăнмаççĕ).

Григорий Яковлев Пысăк Чуллăран куçса килнĕ. Ачин – Михаил Григорьевăн 6 ача: Измаил, Квальберт, Руслан тата ыттисем. Каярахпа ку

вырӑнта – Санькассинчен куҫса килнӗ Васелиса Леонтьева хуҫалӑхӗ.

Харитон Трофимов Пысӑк Чуллӑран куҫса килнӗ, ачисем – Семенпа Феодосия. Семен ачисем: Лука, Федор, Архип, Павел, Клавдия, Митрофан. Каярах кунта Архип мӑшӑрӗ - Степанида Васильева – пурӑннӑ. Унӑн виҫӗ ача – Владимир, Нина, Раиса. Нина Санькассине, Раиса Мари Эл Республикине качча тухнӑ. Владимир – Шупашкарта, унӑн – 2 ача.

Паварнӑйсен таврашӗ - Алексей Никитин, унӑн ачисем – Пелагея, Михаил, Ксения, Серафима, Анна. Пелагея кунта 1981 ҫулччен пурӑннӑ, каярах ӑна ывӑлӗ - Ҫӗнӗ Шупашкарта пурӑнакан Валерий Алексеев тытса тӑнӑ.

Филипп Ефимович Ефимов та – Паварнӑйсен таврашӗ. Ачисем: Федот, Матрена, Васса, Николай. 1923 ҫулта вӗсем Ҫӗпӗре кайнӑ. Ку вырӑнта – Зинаида Александрова хуҫалӑхӗ, ачисем – Алина, Александр. Мӑшӑрӗ - Герман Семенович Семенов (1930 – 1981).

Паварнӑйсен йӑхӗнчи Егор Павлович Павлов (1861 ҫ.ҫ.) Чумаш ялӗ ҫывӑхӗнчен куҫса килнӗ. Ачисем – Тимофей, Екатерина, Дмитрий. Ун килӗ вырӑнӗнче каярах Дмитрий ывӑлӗ - Александр Дмитриевич Дмитриев пурӑннӑ.

Илья Матвеев - Ҫӗвер (Зверь) хуҫа таврашӗ. Ачисем – Алексей, Евдокия, Анна, Семен. Кунта Семен пурӑннӑ. Ачисем – Елизавета, Александр, Павел, Николай, Герман. Германӑн малтанхи

арӑмӗнчен 3 хӗр – Светлана, Людмила тата Татьяна (Шупашкар).

Мефодий Иванович Иванов – Паварнӑйсен таврашӗ. Чумаш ялӗ патӗнчен уйрӑлса килнӗ. Хӗрӗ - Елизавета - Пысӑк Чуллӑри Тарас Аверкиева качча тухнӑ, ачисем – Анастасия, Александра, иккӗмӗш мӑшӑрӗпе – Иван Федорович Федоровпа – Роман, Римма, Анатолий, Николай.

Сахрун таврашӗ - чухӑн Никифор Софронов, ачисем – Елена, Петр (мӑшӑрӗ - Еншикри Нина Ефимова).

Хрисан Иванович Иванов Ҫӗвер (Зверь) хуҫа таврашне кӗрет. Чумашран килнӗ чухне пӗр хӗр ача - Мария – пулнӑ. 1928 ҫулта Ҫӗпӗре куҫса кайнӑ. Ку вырӑнта пурӑннӑ Андрей Григорьевич Иванов та вӗсен ҫулӗпех кайнӑ. Колхозсем пуҫлансан, 1930 ҫулта ҫак вырӑна халӑхпа канашласа Афанасий Герасимова ҫирӗплетсе параҫҫӗ, ку вырӑнта вӑл 1939 ҫулччен пурӑннӑ. Каярах Галина Сидорова кун кунланӑ, ачисем – Григорий, Игорь.

Ефим Фомич Фомин хуҫалӑхӗ Пысӑк Чуллӑран куҫса килнӗ, ачисем – Михаил, Николай, Кира. Кира Ҫӗрпӳ районӗнчи Михайловкӑра тӗпленнӗ. Мӑшӑрӗ - Николай Кузьмин, вӗсен – 3 ача. 1949 ҫултанпа ку вырӑнта Федосия Михайловна Игнатьева пурӑнать, ачисем – Леонид, Николай, Владимир, Людмила, Анатолий. Мӑшӑрӗ - Семен Игнатьевич Игнатьев - 1914 ҫулта ҫуралнӑ. Аслӑ лейтенант, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Япони чиккинче тӑнӑ, 1945 ҫулта яппунсемпе ҫапӑҫнӑ. 1947 ҫулта яла таврӑннӑ. 1948 ҫулта

«Победа» колхоз председателĕнче ĕçленĕ. 1950 çулта «Прогресс» колхоз председателĕн çумĕнче вăй хунă.

Игнатий Григорьевич Григорьев Григорий Захаровран (Çĕвер хуçа таврашĕнчен) уйрăлса килнĕ. Ачисем: Герасим, Александра, Евгения, Игнатий. Герасим ачисем – Афанасий, Никифор, Мария, Марфа. Александра Пысăк Чуллăри Макара качча тухнă, ачисем – Яковпа Евграф. Яков ачисем – Аристарх, Геннадий, Никандр. Евгения Мăн Супарти Петр Савельевпа пĕрлешнĕ, ачисем – Тимофей (мăшăрĕпе – Кĕçĕн Чуллăри Евдокия Дмитриевапа 5 ача ӳстернĕ: Николай, Анатолий, Люба, Алефтина, Зоя), Клавдия, Федот, Зоя, Николай. Кĕçĕн ывăлĕ ашшĕ çуртĕнче пурăннă. Игнатий Григорьев тĕп килте – Григорий Захаров вырăнĕнче – кун кунланă, 6 ача çитĕнтерсе çын тунă: Клавдия, Иван, Семен, Анна, Агафия, Степан. Кайран кунта кĕçĕн ывăлĕ - Степан (вăл 1953 çулта Ольга Кирилловапа пĕрлешнĕ) пурăнма тытăннă, ачисем : Роберт, Олимпиада, Алик, пурте аслă пĕлӳ илнĕ. Степан Игнатьевич Игнатьев «Прогресс» колхозăн Кĕçĕн Чуллăри сĕт-çу ферминче тар тăкнă, ашшĕ-амăшĕ евĕрех хастарлăхпа палăрнă.

Алексей Софронович Софронов – Сахрун таврашĕсем. Мăшăрĕ - Еншиксем, ачисем – Константин, Валентина, Анна, Наталия, Александра. 1926 çулта Кĕçĕн Чуллă ялĕ çунсан, пӳртне Семен Денисова сутса, Самар облаçне куçса каяççĕ. Семен Денисов - Çĕвер (Зверь) хуçа таврашĕ. Пĕчĕк Супарти Марфа Ивановна Иванована качча илнĕ, 7 ача ӳстернĕ: Евдокия, Андрей, Ульяна, Антонина, Анна, Мария тата Григорий. Ульяна учительница

пулнă. Антонина Трак станцийĕнче тĕпленнĕ. Ку кил ырăнĕнче халĕ Пысăк Чуллăран куçса килнĕ Григорий Иванович Иванов пурăнать.

## II. «Кашни çапăçăвах астăватăп...»



(Кĕçĕн Чуллăра пурăннă Александр Дмитриевич Дмитриев аса илĕвĕнчен)

- Фронта эпĕ кĕçĕн командирсен курсне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн лекрĕм. Мана Брянск фронтне ячĕç, запасри 31-мĕш артиллери полкĕн отделени командирне çирĕплетрĕç. Çав вăхăтрах 76 миллиметрлă тупă наводчикĕ те пултăм. Пирĕн ума тăшмана Воронеж еннелле тапăнса килме чарас, çапла майпа унăн вăйне хамăр патра тытса тăрас, Сталинграда пулăшу кӳрес задача лартнăччĕ. Пĕрремĕш çапăçу пĕр чарăнмасăр тенĕ пекех 12 куна пычĕ. Тăшман пирĕн çине çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем ячĕ. Анчах эпир каялла куçмарăмăр. Чăн та, пирĕн енчен те çухатусем пысăк пулчĕç.

Унтан пире Сталинград çывăхне куçарчĕç. Чăн-чăн тамăкчĕ кунта. 22 кун хушши пĕлĕт те курăнмарĕ. Çĕр çунать тейĕн, тăшман самолечĕсем татти-сыпписĕр вĕçетчĕç, снарядсемпе минăсем пĕр вĕçĕмсĕр çурăлатчĕç. Танксем, вĕсем хыççăн автоматчиксем тапăнса килетчĕç. Çав кунсенчен пĕринче, каç енне,

эпĕ расчетран пĕчченех тăрса юлтăм. Юлашки танка пур пĕр иртт ерсе ямарăм: тĕл персе тивертрĕм.

Белгород çывăхĕнче те хĕрӳ çапăçусене кĕме тиврĕ. Пĕр çапăçура кăна манăн 76 миллиметрлă тупă икĕ танкпа боеприпас тиенĕ тепĕр автомашинăна стройран кăларчĕ. Курск патĕнче те çапăçрăм, тăшманăн танк атаки еплине тӳссе куртăм. Ку вăхăт тĕлне эпир çапăçма вĕренсе çитнĕччĕ ĕнтĕ. Унтан Белоруссии, Польша, Хĕвел Тухăç Пруссии çĕрĕсемпе тухрăмăр. 1945 çулхи апрельте пирĕн çул çинчи юлашки юхан шывшăн – Одершăн çапăçăва кĕтĕмĕр, май уйăхĕнче акăлчансемпе пĕрле Çĕнтерĕве уявларăмăр…

Александр Дмитриевич Дмитриев Кĕçĕн Чуллă ялĕнче 1911 çулта çуралнă. Хĕрлĕ Çара ăна 1942 çулхи январьте илнĕ. Çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, «Паттăрлăхшăн» икĕ медале тивĕçнĕ. Фронтран таврăнсан, Александр Дмитриевич счетоводра, «Прогресс» колхозăн тĕп бухгалтерĕнче, Еншик Чуллă ял совет ĕçтăвкомĕн секретарĕнче вăй хунă. Пурнăçран 2004 çулта уйрăлса кайнă.

## III. Вĕсем вăрçăран таврăнман

**Алексеев Константин Алексеевич**, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1943 çулхи çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни паллă мар.

**Алексеев Семен Алексеевич**, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

**Андреев Павел Андреевич**, 1926 ç. ç.. Рядовой. 1945 çулхи мартра хыпарсăр çухалнă.

**Артемьев Данил Артемьевич**, 1905 ç. ç.. 1942 çулхи августăн 19-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă.

**Ваньков Иван Семенович**, 1915 ç. ç.. Капитан. 1943 çулхи февралĕн 20-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Краснодар крайĕнчи Абински районĕнчи Шансуг станицинче пытарнă.

**Григорьев Ефим Григорьевич**, 1917 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

**Ефимов Николай Ефимович**, 1920 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи сентябрьте хыпарсăр çухалнă.

**Игнатьев Иван Игнатьевич**, 1908 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Волгоград (унчченхи Сталинград) облаçĕнчи Городинщенски районĕнчи Томилино ялĕнче пытарнă.

**Митрофанов Анатолий Митрофанович**, 1914 ç. ç.. Старшина. 1945 çулта хыпарсăр çухалнă.

**Николаев Валериан Николаевич**, 1918 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче Ленинград облаçĕнчи çапăçура вилнĕ. Тĕрĕс ăçта пытарни паллă мар.

**Семенов Арсений Семенович**, 1909 ç. ç.. Рядовой. 1941 çулхи декабрьте хыпарсăр çухалнă.

**Семенов Лука Семенович**, 1900 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1942 çулхи августăн 25-мĕшĕнче Смоленск облаçĕнче вилнĕ. Тĕрĕс ăçта пытарни паллă мар.

**Семенов Павел Семенович**, 1910 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулта çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни паллă мар.

**Федоров Константин Федорович**, 1914 ç. ç.. Сержант. 1943 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнчи çапăçура вилнĕ. Орел облаçĕнчи Ревны ялĕнче пытарнă.

**Федоров Макар Федорович**, 1906 ç. ç.. Рядовой. 1942 çулхи декабрьте Ленинград облаçĕнчи Ленинград хули çывăхĕнче хыпарсăр çухалнă.

**Харитонов Лука Семенович**, 1910 ç. ç.. Рядовой. Сурансене пула 1942 çулхи августăн 25-мĕшĕнче вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Кусково ялĕнче пытарнă.

**Эльгер Петр Никифорович**, 1914 ç. ç.. Рядовой. 1944 çулта çапăçура вилнĕ. Ăçта пытарни паллă мар.

**Аса илтерни.** Вĕсем пурте чăвашсем, фронта Красноармейски районĕнчи çар комиссариачĕ урлă кайнă.

## IV. Вĕсем Çĕнтерӳпе таврăннă

**Александров Николай Александрович**, 1926 ç. ç..

**Андреев Семен Андреевич** (1914 – 1952).

Владимиров Иван Владимирович (1916 – 1979). Рядовой, 1145 стрелок полкӗнчи отделени командирӗ. Аманнӑ.

Владимирова Антонина Ильинична (1924 – 1999).

Денисов Карп Денисович (1903 – 1981). Рядовой, 120-мӗш миномет полкӗн стрелокӗ.

Денисов Семен Денисович, 1886 ç. ç.. Аманнӑ.

Дмитриев Александр Дмитриевич (1911 – 2004). Сержант, оруди командирӗ.

Дмитриева Анна Дмитриевна, 1921 ç. ç..

Зайцева Александра Алексеевна, 1920 ç. ç.. Сӑнавçӑ-телефонист, санитарка, БФ.

Иванов Алексей Иванович (1915 – 1965).

Иванов Ксенофонт Иванович (1912 – 1978). Рядовой, автоматчиксен 312-мӗш отделенийӗн шоферӗ.

Иванов Максим Иванович, 1909 ç. ç..

Иванова Елена Ивановна, 1924 ç. ç..

Игнатьев Семен Игнатьевич (1914 – 1978). Аслӑ лейтенант, 279-мӗш артиллери полкӗн взвод командирӗ.

Игнатьев Степан Игнатьевич, 1927 ç. ç.. Рядовой, строительсен ротин 125 отделенийӗн поварӗ.

Михайлов Геннадий Михайлович, 1925 ç. ç..

Никандров Александр Никандрович (1898 – 1956).

Николаев Василий Николаевич (1915 – 1970).

Николаев Михаил Николаевич, 1926 – 1997).

Семенов Александр Семенович (1922 – 1961). Кĕçĕн лейтенант, 21 гварди т. полкĕн взвод командирĕ.

Семенов Павел Семенович, 1924 ç. ç..

Семенова Матрена Семеновна, 1924 ç. ç..

Сергеев Александр Сергеевич (1911 – 1967). Лейтенант, 10-мĕш гварди артиллери полкĕн взвод командирĕ. Аманнă.

Федоров Иван Федорович (1911 – 1969). Стрелоксен 250-мĕш полкĕ.

Федоров Кирилл Федорович (1899 – 1948).

## V. Паянхи тăван ял

Халĕ Кĕçĕн Чуллăра 31 кил шутланать. Икĕ çуртпа çав хушăрах никам та усă курмасть, килсе те курмаççĕ. Çуллахи вăхăтра хĕл кунĕсенче хупă тăраканнисен алăкĕсем те уçăлаççĕ. Ял çыннисенчен 85 çул тултарнисем – иккĕн (Зинаида Александровапа Галина Сидорова; кунсăр пуçне 86-87 çулсенчи Ольгăпа Степан Игнатьевсем тĕп хулара ачисем патĕнче пурăнаççĕ), 70-тен иртнисем те пур. Çамрăк

çемьесем 7. Кăçал вăтам шкултан пĕр яш вĕренсе тухрĕ, пĕрремĕш класа та пĕр ача – Артем Павлов – каять.

Ку чухне кашни ялтах старостăсем ĕçлеççĕ. 2000-2003 çулсенче Кĕçĕн Чуллăра ку тивĕçе Геннадий Иванович Владимиров пурнăçларĕ. 2003 çултан ял старости пулма Григорий Владимирович Яковлева суйланă. Вăл ĕçленĕ тапхăрта Кĕçĕн Чуллăра та ырă улшăнусем пулса иртрĕç: 2005 çулта çуртсене çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтма пуçланă, 2008 çулта вара ял варрине асфальт сарнă çул çитнĕ. Хуçалăхсем арканнă май, шыв башнине тытса тăма та çăмăл мар. Староста çине тăнипех ял çыннисенчен укçа пуçтарса башньăн электросчетчикне улăштарчĕç. Колонкăсем тинех ĕçлесе кайрĕç. Григорий Яковлев евĕр çынсем ытларах пулинччĕ. Ыйтакана нихăçан та пулăшу кӳмесĕр тăмасть вăл. Мăшăрĕпе ывăлпа хĕр çитĕнтерчĕç, иккĕшне те аслă пĕлӳ пачĕç.



Паллă çынсем ялтан сахал мар тухнă. Акă, Измаил Михайлович Григорьев – запасри полковник, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ, кĕçĕн çулхи шкул ачисем валли темиçе кĕнеке те пичетлесе кăларма вăй-хал çитерчĕ. Ульяна Семеновнапа Иван Федорович Федоровсем, вĕсен хĕрĕсем – Ритăпа Зоя, Карп Денисович Денисов, Юлия Филипповна Филиппова учитель профессине алла илнĕ, çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас енĕпе чылай çул хушши ырми-канми вăй хунă.

Анатолий Афанасьевич Афанасьева та ял çыннисем аван пĕлеççĕ. Унăн ашшĕ – Афанасий Герасимович Герасимов – ку тăрăхри «Победа» колхозăн пĕрремĕш председателĕ пулнă. Амăшĕ – Анна Гавриловна Гаврилова – Еншикрен качча пынă. А. Афанасьев вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. Пĕр вăхăт Удмурт АССРĕнчи «Родина» колхозăн тĕп агрономĕнче ĕçленĕ. Анатолий Афанасьевич хамăр районти Ленин ячĕллĕ колхозра та, парти райкомĕн инструкторĕнче те, райплан председателĕнче те, ял хуçалăх управленийĕн начальникĕнче те, районти «Сельхозхими» пĕрлешӳ ертӳçинче те, ӳсентăрансене хӳтĕлекен районти станци пуçлăхĕнче те, ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕнче те вăй хунă. Тăрăшулăхшăн ăна «Ĕçри хастарлăхшăн. В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май» тата «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе наградăланă. 80 çул урлă каçнă пулин те, ĕççĕр лармасть вăл. Килти пахчара ĕçлеме кăмăллать, пулла çӳрет.

Нина Кирилловна Кириллова та кăçал 80 çул тултарнă. Çичĕ ача ӳснĕ вĕсем. Петя, Иван тата Коля

пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă. Иван республикăри Шалти ĕçсен министерствинче чылай çул вăй хунă, милици подполковникĕ пулнă. Чи асли – Гриша – педагогра, Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче тимленĕ. Ун хыççăнхи – Ольга – пурнăçне тăван ялпах çыхăнтарнă. Кĕçĕнни – Лева – Çĕнĕ Шупашкарта пурăнать. Нина Кирилловна хресчен ĕçĕпе 50 çул тимленĕ, Хисеп грамотисемпе парнесене, «Ĕç ветеранĕ» медале тивĕçнĕ, 3 созыв Еншик Чуллă ял совет депутачĕ, чылай çул хушши «Прогресс» колхозри ревизи комиссийĕн членĕ пулнă.



Владислав Анатольевич Павлов предпринимательте тимлет. Вăл халăхран сĕт пухать. Уншăн укçа-тенкĕпе вăхăтра татăлма çине тăрать.

2013 çулта, Таса Февронийпа Петр Муромскисен кунĕнче, Нина Григорьевнапа Константин Михайлович Михайловсем ылтăн туйне уявларĕç.





Михайловсен ылтăн туйĕнче

Константин Михайлович – Кĕçĕн Чуллăсем. Еншик Чуллăра 7 класс пĕтернĕ, каярахпа Улатăрти вăрман техникумĕнче вĕреннĕ. Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ

стройтрестра 51 çул строительте вăй хунă, «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Нина Григорьевна – Çĕрпӳ районĕнчи Турхан ялĕнчен. И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн химипе биологи учителĕнче ĕçленĕ. Нина Григорьевнапа Константин Михайлович 50 çул пĕр-пĕрне юратса пурăнаççĕ, икĕ ача – Александрпа Маринăна - ӳстернĕ. Вĕсен 4 мăнук çитĕнет. Тивĕçлĕ канăва тухнăранпах çу кунĕсене ялта ирттереççĕ. Ачисемпе мăнукĕсем те кунта килсе çӳреççĕ, Кĕçĕн Чуллăна тăван ялĕ вырăннех хураççĕ.

Константин Михайловичăн пиччĕшĕ – Геннадий Михайлович – Тăван çĕр-шывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçине хутшăннă. 17 çулта чухне Ленинград фронтĕнче çапăçма пуçланă та вăрçа Будапештра вĕçленĕ. Ун хыççăн та Инçет Хĕвел тухăçĕнче хĕсметре тăнă. Тăван Чăваш Ене таврăнсан, Шупашкар хулинчи 6-мĕш номерлĕ вăтам шкулта çар ĕç руководителĕнче вăй хунă.





Александр Семенович Семенов ку ялтах 1924 çулта çуралнă. Тăван çĕр-шывăн 1941-1945 çулĕсенчи Аслă вăрçине хутшăннă. Отечественнăй вăрçăн I тата II степеньлĕ орденĕсене тивĕçнĕ. Шел, унăн пурнăçĕ 1962 çулта вăхăтсăр татăлнă. Паттăра Еншик Чуллă масарĕ çине пытарнă. Ывăлĕ – 1948 çулта çуралнă Евгений Александрович – Вăрмар районĕнче пурăнать, унăн икĕ ывăлĕ вара Курск хулинче тĕпленнĕ.

Кĕçĕн Чуллăсем, пĕр сăмахпа, хăйсен пултаруллă та мухтавлă ял çыннисемпе (вĕсем вуншарăн) тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ.

# VI. «Тăван ял çунат хушать»

*(Лина Васильевна Назарова аса илĕвĕнчен)*



Л. В. Назарова – Турцире

Кам юратмĕ тăван ялне! Вăл ялан хăй патне туртать. Пирĕн ял та илемлĕ вырăнта ларать. Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешни ялтан çав тери капăррăн курăнать. Таçта та пулса куртăм пулин те, çак хăйне евĕрлĕхе эпĕ урăх ниçта та сăнаман. Хĕлле пирĕн уйсем шапшуррăн, çуркунне сухаласан, хуп-хуран, çу кунĕсенче сип-симĕссĕн, тыр-пул пиççе çитсен вара ылтăн пек курăнаççĕ. Инçех те мар Мăн Çавал юхан шывĕ авкаланса юхса иртет. Çамрăк чухне тата «Сывлăмпа çиçет улăхри çаран...» тесе юрлаттăмăр. Ачалăхăм та асрах-ха. Çумăр хыççăн карта кăмпи тататтăмăр. Ял

çумĕнче çырмасем нумай: Сар Иван юппи, Малти çырма, Çаврака çурт... Сăртра юр ирĕлсенех мечĕкле выляса савăнаттăмăр.

Çаврака çурт тенĕрен тĕлĕнмелле истори пулса иртнĕччĕ пирĕнпе. Пĕр каç виççĕн колхоз садне пан улми вăрлама (кун пекки кашнинпе тенĕ пекех пулнă ĕнтĕ) кайрăмăр. Хутаççене тултартăмăр та каялла çырма тăрăх шикленсе утатпăр. Пăч тĕттĕм. Çаврака çурт тĕлне çитрĕмĕр кăна ... умра çап - çутă çуталса кайрĕ. Пăхатпăр та çаврака япала çинче çуталакан пĕчĕк çынсем лараççĕ. Хăйсен пуçĕсем те çап-çаврака. Хăранипе çĕр çумне лăпчăнтăмăр, сывлама та хăратпăр. Тем самантран каллех пăч тĕттĕм пулса тăчĕ: хайхисем вĕçсе кайрĕç пулас. Йăмăкпа – Светăпа (вăл халĕ пирĕн хушăра çук ĕнтĕ) ку пулăма кайран час-часах аса илеттĕмĕр. Халĕ кун пирки Санок Галини çеç каласа пама пултарĕ. НЛО пулнă-ши? Анне ăна «кăвак хуппи», «хăв шăпупа телее ыйтмаллаччĕ», тетчĕ.

«Тăвансем, ял-йышсем,

Асран кайми ыр çынсем.

Тĕл пулнă чух савăнар,

Ĕмĕр пĕрле пурăнар...»

Ку йĕркесене çыртăм та, ял çыннисем, чи малтанах атте-анне, асатте-апай, аппа, пичче, тăвансем аса килчĕç. Чăн та, апай пирĕнпе нумай пурăнаймарĕ (питĕ тутлă çăкăр пĕçеретчĕ вăл). Çĕвĕçĕ ĕçне хăнăхтарчĕ. Асатте пире, шкул ачисене, кинона кайма

5 - 10 пус кăларса паратчĕ. Хаçат-кĕнеке вулама, радио итлеме, сунара çӳреме юрататчĕ. Упа та тытнăран ăна «Упа Микулайĕ» те тетчĕç.

Эпир ача чухне ял çыннисем утă çулма, тырă вырма йышлăн тухатчĕç. Çав шутра учительсем те. Карп Денисович, акă, пирĕн аннене хисеплесе: «Малтан Ульянăна тăратăр-ха», тетчĕ. Анне, чăн та, арçынсенчен ӳксех юлман ĕçре. Çаврăнăçулăхĕпе, вăр-варлăхĕпе палăрнă кĕрнеклĕскер. Тутлă апатçимĕç пĕçеретчĕ тата. Асрах вăл хатĕрленĕ сĕлĕ кĕселĕ. Ăна сахăр сиропĕпе çимеллеччĕ.

Карп Денисовичсен çемйи асра. Ывăлĕ – Юра – ялтах пурăнатчĕ, Еншикри Васелиса ятлă хĕре качча илнĕччĕ. «Веçок акки» теттĕмĕр ăна. Питĕ хитре юрлатчĕ. Вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Ун хыççăн упăшки, икĕ ывăлĕ пурнăçран уйрăлчĕç. Кĕçĕн ачи – Юра - ялтах пурăнать. Мăшăрĕ – Ева – питĕ пултаруллăскер. Карп Денисовичăн тепĕр ывăлĕ Коля ятлăччĕ. Унпа калаçнă эпĕ. Чул хулара политехника институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн пĕр вăхăт унтах пурăнчĕ. Каярахпа яла куçса килчĕ, икĕ хутлă çурт хăпартса лартрĕ. Мăшăрĕ те – хамăр ялсемех: Нина Афанасьева. «Манăн ялта часовня лартас килет», тетчĕ Николай Карпович. Шухăшне пурнăçа кĕртеймерĕ, çĕре кĕчĕ. Мăшăрĕпе ачисем пурăнаççĕ халĕ ку çуртра. Иван Владимировичăн хĕрĕ – Лида - çуралнă кил-çуртне çĕнетсех тăрать. Сăмах май, вăл шкул хыççăн лента тĕртекен фабрикăра ĕçленĕ, Чăваш Республикин Аслă Канашĕн депутачĕ те пулнă. Маттур çынсем!

Кашни çемье хăйне валли «йăва» çавăрасшăн. Игнатьевсем, ав, çĕнĕ виçĕ çурт лартрĕç. Çĕнĕ урамра манăн пĕрремĕш учительница пурăнатчĕ, сăпайлăскер тата таса чунлăскер. Ачисем – Маргарита, Леня, Алик, Юра, Зоя, Галина – аслă шкул вĕренсе пĕтерчĕç. Ку кил-çуртра халĕ Юра пурăнать. Кирилловсем те аса килеççĕ. Нина аку ялтах. Юрлатчĕ. Шăллĕ – Лева - купăс калатчĕ. Герасимовсен пысăк çемйи пÿрт-çуртне сутса урăх çĕре пурăнма тухса кайрĕ. Ялти фермăна колхоз председателĕнче ĕçленĕ Герасимов пуçарăвĕпе тунă. Кÿлĕ туса унта пулăсем ĕрчетнине те астăватăп. Герман Семенов мăшăрĕ – Валентина куç умне тухать. Артистка евĕрехчĕ вăл, хитре тăхăнма та юрататчĕ. Вăхăтсăр уйрăлчĕç çав пурнăçран. Халĕ ку çурта хĕрĕсем килсе çÿреççĕ, амăшĕ евĕрех илемлĕскерсем, çыпăçуллăскерсем. Антонинăпа Александр Дмитриевсен çемйи пирки çырмасăр та май çук. Кил хуçи хĕрарăмĕ пирĕн патне кашни кунах кĕрсе тухатчĕ. Юнашарта пĕр çемьери пек пурăннă эпир. Çинави аку пĕр ĕçрен те юлман. Вĕсемпе кÿршĕ каччи – Гриша - техникум пĕтерсе яла таврăнчĕ, район центрĕнче ĕçлет. Вĕсен амăшĕ икĕ ачине пĕччененех ура çине тăратрĕ. Иккĕмĕш ывăлĕ – Игорь, летчик, Шупашкарта пурăнать. Ÿркенсе-туса тăмаççĕ вĕсем, пур ĕçе те майлаштараççĕ. Ивановсен çемйи те кил-çурта тăпăл-тăпăл тытса тăрать. Толя пурнăçран уйрăлчĕ ĕнтĕ. Унăн ачисем пăхаççĕ кил-çурта.

Ольгăпа Степан Игнатьевсен çемйи те ял – йышра хисепре. Степан Игнатьев хăмлаçă звенине ертсе пынă. Халĕ иккĕшĕ те хĕрĕ – Олимпиада - патĕнче Шупашкарта пурăнаççĕ. Ялти хуçалăхне ывăлĕ – Алик

тытса тăрать. Юнашарта унăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ – Анатолий Семенович - пурăнать. Çемьеллĕ, икĕ ывăл – Андрейпа Саша.

А. Игнатьевăн пиччĕшĕсем - Кольăпа Леня та, аппăшĕ – Люда та ялтан каяс темерĕç, çĕнĕ çуртсем хăпартрĕç. Вова вара Германире пурăнать.

Николай Федорович Федоров Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăкра тĕпленчĕ, шкул – интернатра директорта вăй хучĕ Эпир ăна «пичче», амăшне «мăн аку» тесе хисеплесе чĕнетпĕр.

Ксенофонтий Иванов çемйине аса илетĕп. Хăй водитель, мăшăрĕ бригадир пулнă. Ачисем халĕ тĕп хулара пурăнаççĕ. Пĕр ывăлĕ – Анатолий - вăхăтсăр çĕре кĕчĕ, унăн ялти пӳрт - çуртне ывăлĕ тытса тăрать, Заволжски ЛПУМГра тимлет.

Хамăр çемье çинчен те кăштах чарăнса тăрам. Атте-анне килĕнче (шел, вĕсем пурнăçран питĕ ир уйрăлса кайрĕç) улттăн ӳсрĕмĕр. Вăхăт çитсен, вĕрентĕмĕр, хамăра килĕшекен профессине суйласа илтĕмĕр. Çемьеллĕ, ача-пăчаллă пултăмăр. Кил ăшшине йăмăкăм – Оля – упрать. Аслă пичче Шупашкарта, аппа – Валя - Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Карай Чаккинче пурăнаççĕ. Света вара, ятлă-сумлă строитель, нумай пурăнаймарĕ. Мĕн шутланине яланах пурнăçа кĕртетчĕ вăл, Шупашкар районĕнче пысăк çурт та лартрĕç. Ачисене те, хăй евĕрех, чăн-чăн пурнăç çынни пулма вĕрентсе воспитани пачĕ. Эпĕ тата аслă аппа – Роза – Çĕнĕ Шупашкарта пурăнатпăр. Пĕр-пĕрне яланах пулăшма тăрăшатпăр. Кăмăлсем пурин те ырă та лайăх. Çакă пире çитĕнӳсем тума, пурнăç

çине çĕнĕлле пăхма, хамăр пĕлнине ачасене пама пулăшать. Эпĕ хам Еншик Чуллăри «Энжей» фольклор ушкăнне кĕпе-тумтир çĕлеттерсе пама пулăшу кӳтĕм. Юхма Мишши писательпе тачă çыхăну тытатăп та, унпа пĕрле Еншик Чуллă шкулĕпе ялти вулавăшра пултăмăр, паллă çыравçă кĕнекисене чылай парнелерĕмĕр. Яла килсех çӳретĕп, унта пурăнакансем валли мĕн те пулин ыррине тăвас килет.



Акка–Людмила Лукинична Семенова – хăйĕн пурнăçне Шупашкарти пир-авăр комбиначĕпе çыхăнтарчĕ, тивĕçлĕ канăва тухиччenex унта вăй хурса «Хисеп палли» орденпа «Çăмăл промышленноçа аталантарнăшăн» паллăна тивĕçрĕ.



Мĕнпур чăваш халăхĕн
Эмине ячĕллĕ хĕрарăмсен
наци премине 2014 çулта

[illegible]

Назарова (Николаева)
Акулина Васильевна

пама йышăнчĕ

Всечувашская национальная
женская премия имени Эмине
в 2014 году присуждается

Акулине Васильевне
Назаровой (Николаевой)

за большие успехи
в общественной и творческой
деятельности и за неустанную работу
по воспитанию женщин в духе
любви к родине,
к национальной культуре, к добрым
традициям и обычаям родного народа

«Тавах аттене, тавах аннене,

Çын çинче çын пек ӳстернĕшĕн,

Чĕкеç чĕлхине, улăп вăй-халне

Хĕрхенмесĕр пире пилленĕшĕн...»

Хамăр çумри Геннадий Михайлович çемйи çинчен те çырса хăварасшăн. Вăл - çар çынни, тивĕçлĕ канăва тухсан, ялта пӳрт-çурт çавăрчĕ. Ăна ывăлĕ пăхса тăрать. Юнашарта шăллĕ ашшĕ килĕн ăшшине сӳнме памасть: вĕлле хурчĕсем усраççĕ, пахча çимĕç ӳстереççĕ.

Санькăн ачисем те, Лукинсем те, Никон пиччен хĕрĕпе кĕрӳшĕ те, Игорь те ялтах пурăнас тĕллевлĕ. Апла пулсан, ял пĕтмест-ха – пурăнать.

«Иртсе кайрĕ ĕмĕр сисĕнмесĕр,

Мĕн чул ĕмĕт пурнăça кĕмен.

Ах, ытла та пуράннă пĕлмесĕр,

Кĕл тумашкăн, тен, эпир пĕлмен,

Ĕмĕр иртессе те шутламан».

## VII. Пирĕн ентешсем

### Маттур, Марина!

Марина Афанасьева çамрăк-ха, 23-ре кăна. Апла пулин те, унăн çитĕнĕвĕ-ÿсĕмĕсем пысăк.

*В. Данилов*

Марина амăшĕ – Ольга Васильевна – Кĕçĕн Чуллăсем. Хĕр ача Красноармейскинчи вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех çăмăл атлетикăпа интересленнĕ, пĕр хут çеç мар район чемпионĕ пулнă. Шкулти тата районти мероприятисенче те ăна час-часах курма пулнă, илемлĕ вулакансемпе ÿкерекенсен конкурсĕсене, «Зарницăпа» «Орленок» тупăшусене хутшăнса ялан тенĕ пекех малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Республика шайĕнче те палăрнă Марина. Акă, республикăри фантастика конкурсĕн «Прозăпа драматурги» номинацийĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă, Г. Айхине халаллана Интернет олимпиадăра хастарлăх кăтартнăшăн Хисеп хутне тивĕçнĕ тата ытти те. Шкул пĕтернĕ тĕле 800 метрлă дистанцине чупса 2-мĕш разряд илнĕ.

2009 çулта вăл И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн машиностроительнăй факультетне «Стандартизаци тата сертификаци» специальноçа вĕренме кĕнĕ. Кунта та пысăк активлăхпа палăрнă Марина. Пĕрремĕш курсрах факультетсем хушшинчи КВНа, Студентсен çуркуннине, университетри «Ульяновец», çавăн пекех республикăри «Советская Чувашия» хаçатсен парнисене тивĕçессишĕн иртнĕ çăмăл атлетсен кросĕсене, студентсен регионти 44-мĕш ăслăлăх конференцине (унта 2-мĕш вырăн илнĕ) хутшăннă. Вĕреннĕ вăхăтрах пултаруллă хĕр студентсемпе çамрăксен регионти фестивалĕнче (2013 ç.), Шупашкарти пахалăх форумĕнче (2013), Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри пахалăх форумĕнче (2012) 2-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. Хисеп грамотисемпе Тав хучĕсем тата Дипломсем вуншар унăн. Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен естествознани тата техника дисциплинисемпе иртнĕ IX ăслăлăх конференцийĕн 1 степеньлĕ Дипломĕ, вĕренекен çамрăксен ăслăлăх пултарулăхĕн «Юность Большой Волги» ХУ1 конференци-фестивалĕн лауреачĕн Дипломĕ тата ыттисем те. Çăмăл атлетикăпа, баскетболпа, футболпа, волейболпа та интересленме пăрахман Марина ку тапхăрта. Çакна тĕрлĕ Дипломсем те яр-уççăн çирĕплетеççĕ. Вăл – спорт ориентированийĕ енĕпе Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командин членĕ.

Общество ĕçĕнче те хастар Марина. Факультетри çамрăксен шыравĕсен ăслăлăхпа методика центрĕн координаторĕ, «Чăваш Енти çул çӳревçĕсен Пĕрлĕхĕ» общество организацийĕн членĕ тата ытти те.

М. Афанасьева пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче Пĕтĕм Раççейри спорт туризмĕн Сочи хулинче пулнă çамрăксен фестивалĕнче 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Унтан таврăнсан, республикăн пĕрлештернĕ командин членĕсем Чăваш Ен Пуçлăхĕпе М. В. Игнатьевпа тата Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Атăл çи федераллă округри полномочиллĕ Представителĕпе М. Бабичпа тĕл пулнă. Сăмах май, Марина 2011 тата 2014 çулсенче республика Пуçлăхĕн пултарулăхри ăнтăлушăн паракан ятарлă стипендине те тивĕçнĕ. Пĕтĕм тĕнчери тата Пĕтĕм Раççейри тĕрлĕ конференцисемпе конкурссене тата олимпиадăсене те пĕрре кăна мар хутшăннă. Унăн ăслăлăх доклачĕсем тĕрлĕ енлĕхпе палăрса тăраççĕ.

Эпир те ăна ӳсĕмсем сунатпăр.



*Сăн ӳкерчĕкре: Марина Афанасьева.*

## VIII. Кĕçĕн Чуллă – 155 çулта

Тăван Кĕçĕн Чуллă ялĕ йĕркеленнĕренпе 2016 çулта 155 çул çитет. Çын пурнăçĕшĕн нумай пек, анчах та ял историйĕшĕн сахал та çакă. 155 çул ĕнтĕ ял урамĕсемпе ăна чун-чĕререн парăннă çынсем утаççĕ, яла илемлĕрех те капăртарах тăвас тĕллевпе кун кунлаççĕ. Пĕр ăру теприне улăштарать, çапах та ял хăйĕн ырă та пархатарлă çыннисене нихăçан та манăçа кăлармасть. Акă, чылайăшĕн ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ пысăках мар çак кĕнекере те ĕмĕрсем валли çырăнса юлчĕ. Тивĕç те Кĕçĕн Чуллăсем ăна.

Тăван ял пуçланса кайнăранпа кĕçех 155 çул çитет. Ырă та асра юлмалли пулăм çакă. Тăван ялăн ĕмĕрĕ татах та татах вăрăм пултăр. Унăн çыннисем мирлĕ тӳпе айĕнче ĕмĕр-ĕмĕр савăнса пурăнччăр, Тăван çĕр-шывăмăрăн - мăнаçлă Раççейĕн – ырлăхĕпе малашлăхĕшĕн ырми-канми вăй хуччăр.

Ялан çапла пултăр!

## Усă курнă литература


1. Астăвăм. 5-мĕш том. Шупашкар.1999. 299 – 300-мĕш стр..

2. Астăвăм. 4-мĕш том. Шупашкар. 2006. Иккĕмĕш пайĕ. 241 – 242 стр..

3. В. Константинов. Трак тăрăхĕнчи ялсем. Красноармейски, кăрлач, 1995.

4. А. Д. Дмитриевăн аса илĕвĕсем.

## Тупмалли:

1. Мăнаçланатпăр санпа, Кĕçĕн Чуллă……..............1

2. Аваллăхран тытăнса……………………….............2

3. «Кашни çапăçăвах астăватăп»…………..........25

4. Вĕсем вăрçăран таврăнман……………………..26

5. Вĕсем Çĕнтерӳпе таврăннă……………………..28

6. Паянхи тăван ял……………………….............30

7. «Тăван ял çунат хушать»……………………….37

8. Пирĕн ентешсем……………………….............44

9. Кĕçĕн Чуллă - 155 çулта…………………...........47

Редактор *Ю.З. Борисов*
Компьютерный набор *В.М. Данилов*
Корректор *В.М. Данилов*
Компьютерная верстка *Э.И. Иванова*

*Физ. печ. л. 3*
*Тираж 70 экземпляров*

55.00



Ольга Васильевна Афанасьева 1956 çулта Кĕçĕн Чуллă ялĕнче çуралнă. Еншик Чуллăри вăтам шкулта, Шупашкарти пир-авăр техникумĕнче вĕреннĕ. Пир-авăр комбинатĕнче, Красноармейскинчи райпора, "Волготрансгаз" ОРСра,Еншик Чуллă ял тăрăхĕн администрацийĕн специалистĕнче вăй хунă. Халĕ О.В. Афанасьева - тивĕçлĕ канура.

Виктор Михайлович Данилов хамăр районти Пысăк Чуллă ялĕнче 1957 çулта çуралнă. Еншик Чуллăри вăтам шкултан, партин Чул хулари аслă шкулĕнчен тата патшалăх службин Атăл-Вятка академийĕнчен вĕренсе тухнă. Районти радиовещани редакторĕнче 27 çул ытла, 15 çул район администрацийĕнче тĕрлĕ должноçсенче ĕçленĕ. Халĕ вăл - районти Ял пурнăçĕ" хаçатăн ял хуçалăх, промышленность, строительство пайĕн редакторĕ. Пичет ĕçĕнче турĕ кăмăлпа вăй хунăшăн чылай Хисеп грамотипе Диплома тивĕçнĕ.

В.М.Данилов - Чаваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, районти Нестер Янкас ячĕллĕ преми лауреачĕ.